← 1 стр. МАТТУР!

# Библиотекăран çĕклемĕ-çĕклемĕпе кĕнеке йăтнă

**– «Лаша пуласси – тихаран, çын пуласси ачаран паллă», – тенĕ. Ачалăха куç умне кăларар-и?**

– Эпĕ Вăрмар районĕнчи Пысăк Енккасси ялĕнче çуралса ӳснĕ. Ача чухнех кĕнекепе туслăччĕ, шкула çӳреме пуçличченех вулама вĕрентĕм. Тепĕр тесен, паян кунпа тĕлĕнтерейменĕн. Хальхи ачасен шкула кайиччен вулама вĕренмелле. Пирĕн килти библиотека самай пысăкчĕ. Унта вырăс, чăваш классикĕсен кĕнеки нумайччĕ. Юлташсемпе ăмăртмалла тенĕ пек ялти библиотекăна чупаттăмăр, çĕклемĕ-çĕклемĕпе кĕнеке йăтса тухаттăмăр. Вулавăш ĕçченĕ Надежда Никонорова пире тарават кĕтсе илетчĕ. Ачасене вулама хавхалантарас тĕлĕшпе мĕн кăна ирттерместчĕ-ши? Библиотека çумĕнче театр пĕрлешĕвĕ те вăйлă ĕçлетчĕ. Хăтлă, çутă вулавăш маншăн тăван кил пекехчĕ. Паянхи кун та унта таврăнас килет.

Ачасемпе «библиотекăлла» выляттăмăр. Пĕр-пĕрин патне кайса кĕнеке-журнал вулама илеттĕмĕр. Эпĕ хамăрăн килти библиотека хуçиччĕ. Кашни кĕнекене номерленĕччĕ, формулярсем çырнăччĕ. Хама чăн-чăн библиотекарь пек тытаттăм, килнĕ ачасене литературăпа тивĕçтереттĕм.

**– Пурнăçунта тарăн йĕр хăварнă çыравçăсене аса ил-ха.**

– Асăмра Энид Блайтон, Артур Конан Дойл, Агата Кристи, Альфред Хичкок детективĕсем. Чăвашлисенчен чи юратнисем вара – Леонид Агаковăн «Ылтăн вăчăра», Трубина Мархвин «Ача чухнехи», Владимир Канюковăн «Ача-пăча сăмахлăхĕ» хайлавсем. Юлашкине алăран ямастăм. Пĕрмай хампа пĕрле илсе çӳренĕрен çĕтĕлсех пĕтнĕччĕ. Аннерен час-часах сăмах лекетчĕ. Вăл ĕç хушсан: «Çиччас!» – теттĕм те пĕр-икĕ сехетлĕхе кĕнеке ăшне путаттăм.

**– Эсĕ филолога вĕренсе тухнă. Шăпа сана ЧР Наци библиотекине епле майпа илсе çитерчĕ?**

– Пурнăçăм библиотекăпа тачă çыхăннă, анчах унта ĕçлĕп тесе шухăшламан. Ку ăнсăртран пулса тухрĕ тесен те юрать. Наци библиотекине вулама çӳреттĕм. «Кунта ĕçлесен кĕнеке хыççăн кĕнеке шĕкĕлчеме пулать вĕт», – пĕррехинче пуçа çапла шухăш пырса кĕчĕ. Ун чухне шăпах ĕç шыраттăм. Манăн телее библиотекăра вакансии пурччĕ. 6 çул ĕнтĕ наци литературипе библиографи пайĕнче тăрăшатăп.

**– Санăн шухăшпа, Наци библиотеки республикăри ытти вулавăшран мĕнпе уйрăлса тăрать?**

– Вăл – чи пуянни. Кунта 2 миллион ытла кĕнеке, хаçат-журнал, ытти документ упранать. Вăл – пурте усă курма пултаракан вулавăш кăна мар, кĕнекесене упракан патшалăх шайĕнчи тĕп учреждени те, ăслăлăхпа тĕпчев ĕçĕсен центрĕ те. Çавăн пекех Чăваш Енри тата республика тулашĕнчи чăвашсемпе ĕçлекен библиотекăсен методика центрĕ те. Фондра альбомсем, атлассем, промышленноç каталогĕсем, патентсемпе карттăсем, слайдсем, диафильмсем… упранаççĕ. Кашни çул вăтамран 1000 кăларăм хушăнать, çав шутра чăвашла тухнисем – 300-400 экземпляр. Унсăр пуçне çулсерен 300 ытла хаçат-журнал килсе тăрать. Сайра тĕл пулакан тата хаклă кăларăмсен коллекцийĕ пĕлтерĕшлĕ вырăн йышăнать. Вĕсен шутĕнче – чăваш халăхне çутта кăларнă Иван Яковлевăн, чăваш халăх историпе культурин тĕпчевçисен Николай Золотницкин, Николай Ашмаринăн, Николай Никольскин пурăннă чухнехи кăларăмĕсем, пĕрремĕш чăваш кĕнеки /«Сочинения, принадлежащие к грамматике чувашского языка»/, чăвашсен пĕрремĕш журналĕсем /«Ана» тата «Сунтал»/, пĕрремĕш хаçачĕ /«Хыпар»/ тата ытти те.

**– Библиотека пĕр вырăнта тăмасть, вăхăтпа тан утать. Çĕнĕ проектсемпе акцисем пурнăçланаççĕ. Халăх вĕсене мĕнле йышăнать?**

– Манăн шухăшпа, «Чăваш литературин ылтăн çӳпçи: вуламалли 100 кĕнеке» проект чи ăнăçлисенчен пĕри пулчĕ. Ăна шăпах литература çулталăкĕнче пуçарнăччĕ. Интернетра сасăлав йĕркелерĕмĕр, халăх «çӳпçене» кĕме тивĕç кĕнекесене суйларĕ. Пĕтĕмлетĕвне тишкерсе 100 чăваш çыравçин кĕнекисенчен электрон коллекци хатĕрлерĕмĕр. Унпа Наци библиотекин сайтĕнче паллашма пулать. «Чăваш литературин ылтăн çӳпçине» XVIII ĕмĕр варринчен пуçласа XIX ĕмĕрти тĕрлĕ жанрпа çырнă илемлĕ литература тата ăслăлăх литератури кĕнĕ. Çав шутра – Константин Ивановăн, Çеçпĕл Мишшин, Петĕр Хусанкайăн, Ухсай Яккăвĕн, Геннадий Айхин, Çемен Элкерĕн, Юрий Сементерĕн тата ытти паллă çыравçăн кĕнекисем. «Çӳпçене» 204 хайлав кĕнĕ, вĕсенчен 128-шĕ – чăвашла, 76-шĕ – вырăсла куçарнисем. Хăш-пĕр хайлава вулама кăна мар, итлеме те май пур.

Тепĕр акци пирки те калам. Чăваш автономи облаçне йĕркеленĕренпе 100 çул çитнине халалласа «Литературăллă Чăваш Ен: çĕрçуллăхри чи килĕшнĕ кĕнеке» вулав референдумне ирттертĕмĕр. Унта пурĕ 5387 çын хăйне килĕшнĕ кĕнекешĕн сасăларĕ. Унта çĕршывăмăрăн тĕрлĕ регионĕнчен хутшăнчĕç. Александр Артемьевăн «Салампи» кĕнеки чи нумай сасă пухса «Çĕрçуллăхри чи килĕшнĕ кĕнеке» ята тивĕçрĕ.

**– Вулавăшра пурнăç вĕресе тăрать!**

– Çапла! Библиотекăна «кичемлĕх утравĕпе» танлаштараккансем пирĕн патра юлашки хут хăçан пулнă-ши? Тĕрлĕ мероприяти ирттеретпĕр: кĕнеке хаклавĕ, семинар, литературăпа музыка каçĕ… Чăваш тĕррине вĕренес текенсем те вулавăша пухăнаççĕ. Пĕлтĕр кăна коронавируса пула пĕр вăхăт вулакансене йышăнаймарăмăр. Апла пулин те алă усса лармарăмăр. Библиотекăн «Ютубри» каналĕнче онлайн мелпе «çавра сĕтелсем», лекцисемпе тĕлпулусем ирттертĕмĕр. Чăваш классикĕ Константин Иванов çуралнăранпа 130 çул çитнине халалласа Раççей халăхĕсен поэзийĕн «Атăл асамачĕ» фестиваль иртрĕ. Ăна Чăваш наци телекуравĕпе, «Ютубри» каналпа, соцсетьре кăтартрăмăр. Кăçал Наци библиотеки 150 çул тултарчĕ. Юбилее халалланă мероприятисем çулталăкĕпех иртĕç.

**– Эсĕ пуласлăхра библиотекăна мĕнле куратăн?**

– Малаллах аталанĕ, сăн-сăпатне, тĕллевне улăштарĕ. Çĕнĕ технологисем пирĕн ĕçе витĕм кӳреççĕ. Электрон библиотека пурнăçа кĕрсе пырать. Унта чăваш халăхĕн культурипе ăслăлăхĕшĕн пĕлтерĕшлĕ тавра пĕлӳ ĕçĕсене, сайра тĕл пулакан кĕнекесене кĕртнĕ. Паянхи кун тĕлне – 40 пин ытла документ. Чăваш кĕнекисемпе тĕнчен тĕрлĕ кĕтесĕнче паллашма пулать. Документсене цифра çине куçарас ĕç малалла пырать.

**– Эсĕ «Варкăш» литература клубне ертсе пыратăн. Тĕрлĕ кĕнекене хĕрӳ сӳтсе яватăр.**

– 2017 çулта йĕркеленнĕ клуб чăвашла вулама юратакансене пĕрлештерет. Унта тĕрлĕ ӳсĕмри çынсем хутшăнаççĕ: студентсем, вĕрентекенсем, хаçат-журнал, радио тата телекурав ĕçченĕсем, çыравçăсем, вулакансем. Кашни уйăхра пухăнса пĕр-пĕр чăваш çыравçин кĕнекине сӳтсе яватпăр. Хальлĕхе 30 ытла автор пултарулăхне тишкертĕмĕр.

**– Эсĕ те литература анине «сухалатăн» – сăвăсем çыратăн.**

– Хам пирки сăвăсен авторĕ теейменĕп. Хушăран 1-2 йĕрке çырса хуни пулкалать. Сăвă çырмашкăн хăйне евĕр сывлăш, кăмăл-туйăм, пĕчченлĕх кирлĕ. «Варкăш» тĕлпулăвĕсем хыççăн чунра хавхалану çăл куçĕ тапать. Манăн калем хăйĕн вăхăтне кĕтет.

**Ольга КАЛИТОВА.**

Ольга ТИМОФЕЕВА архивĕнчи сăн ӳкерчĕк.



**КĔСКЕН**

**Тĕнчери юратнă вырăн:** тăван ял.

**Апат янтăлама юратмасть.** Çапах пĕçернĕ чухне хăй кăмăлланине хатĕрлеме тăрăшать: борщ, винегрет, тулă пăтти…

**Вăтанчăк та, харсăр та пулаять.** Ку веçех лару-тăруран килет.

**Ачалăхшăн тунсăхламасть.** Мĕншĕн тесен хăйне халĕ те çавăнтах юлнăн туять.

**Унăн ачашланма пĕлмен хура кушак пур.** «Хуçине пăхнă», – теççĕ тăвата уралла тусĕ пирки юлташĕсем.

ÇАМРĂКСЕН ХАÇАЧĔ/ МОЛОДЕЖНАЯ ГАЗЕТА

● УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ
Чăваш Республикин Цифра аталанăвĕпе информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви;
Чăваш Республикин Цифра аталанăвĕпе информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин «Хыпар» Издательство çурчĕ» Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ
Директор-тĕп редактор Т.Г.ВАШУРКИНА

● Редакципе издатель адресĕ, 428019, Шупашкар хули, Иван Яковлев проспекчĕ, 13, Пичет çурчĕ, III хут
Ĕç кунĕ 8 сехет те 45 минутран пуçласа 17 сехет те 45 минутчен, шăматкунпа вырсарникунсăр пуçне.

Рекламăпа пĕлтерӳсене 316-мĕш пӳлĕмре йышăнаççĕ.
Тел. 28-83-70, 56-20-07
Факс: /8352/ 28-83-70.
Электрон почти, molgazeta@rambler.ru
hypar@mail.ru
Сайт: www.hypar.ru

● Телефонсем:
Редактор 36-13-38
Политика, право, информаци пайĕ 36-67-57
Экономика, социаллă ыйтусен, ял пурнăçĕн пайĕ 36-13-32
Çамрăксен организацийĕсен, çарпа патриотизм, спорт пайĕ 36-66-92
Культура, кăмăл-сипет, çырусемпе массăллă ĕçсен пайĕ 36-67-57

Редактор И.Е.АЛЕКСЕЕВА

● Издательство директорĕ
Тел. 64-24-01

● Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен тытăмĕнчи тĕрĕслев службин Чăваш Республикинчи – Чăваш Енри управленийĕ 2013 çулхи ака уйăхĕн 30-мĕшĕнче ПИ ФС77-54015 номерпе регистрациленĕ.
● Хаçат индексĕ – П2236.

● Ал çырусене рецензилемеççĕ, тавăрса памаççĕ. Авторпа редакци шухăшĕ пĕр килмесен те пултарать. Редакци авторсемпе çыру çӳретмест.

● Дежурнăй редактор О.Ю.КАЛИТОВА

● Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АУО типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13.

Тираж 11394.
Заказ 481.

Номере 2021.03.17 алă пуснă. Пичете графикпа 17 сехетре алă пусмалла, 18 сехетре алă пуснă.